27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
4
ВЫРСАРНИКУН
110(6605) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплинӑшӑн

Нумай миллионлӑ рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем, хӑйсене ӗҫ фронтӗнчи гвардеецсем тесе шутласа, хӑйсен вырӑнӗсенче хастарлӑн, вӑя шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса илнӗ обязательствӑсене пӗтӗмпех тата чылай чухне ирттерсе тултараҫҫӗ. Ҫав ҫитӗнӳсене вӗсем вӑя шеллемесӗр ӗҫлесе кӑна мар, дисциплинӑна вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек ҫирӗппӗн пӑхӑнса ӗҫлесе, хӑйсен ӗҫне тӗрӗс организацилесе тӑваҫҫӗ.

Мирлӗ строительство ҫулӗсенче пирӗн ҫӗршывра ӑнланулла социализмлӑ ӗҫ дисциплини тунӑ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ӗҫ дисциплини татах та ытларах ҫирӗпленчӗ. «Ҫынсем типтерлӗрех, хастарлӑрах, дисциплинӑллӑрах пулса тӑчӗҫ, вӑрҫӑ хушнӑ пек ӗҫлеме вӗренчӗҫ... Хӑйсен граждӑнла тивӗҫне ӑнланман ҫынсем, ҫӑвар карса тӑракан, наян, кахал ҫынсем тылра сахалланнӑҫемӗн сахалланса пыраҫҫӗ». (Сталин).

Рабочисемпе инженерла-техникла работниксен тата служащисен пысӑк пайӗ хӑйсен тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑ вӑхӑтрах предприятисемпе учрежденисенче дисциплинӑна пӑсакан работниксем те тӗл пулаҫҫӗ-ха. Калинино райпромкомбинатӗнчен акӑ унта массӑллӑн прогул туни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Мартӑн 22-мӗшӗнче 10 ҫын прогул тунӑ. Кун ҫинчен районри «Коммунизм ялавӗ» хаҫат сигнал панӑ. Анчах райпромкомбинат директорӗ ӗҫ дисциплинине пӑсакансене ответ тыттарман. Прокуратура та вӑл ӗҫ ҫине ҫийӗнчех ҫавӑрӑнса пӑхман. Ҫавна пула вара унта прогулсем тӑвакансен хисепӗ татах та ӳсме пуҫланӑ. Ку вӑл пӗртен-пӗр факт мар. Ӗҫ законӗсене пӑснисем Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен, Ҫӗмӗрлери «Большевик» заводсенче тата ытти предприятисемпе учрежденисенче те пулнӑ.

Ӗҫ дисциплинине пӑсакансем — прогулщиксемпе летунсем тата кахалсем хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва сиен кӳреҫҫӗ. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫара хӗҫпӑшалсемпе вӑрҫӑ техники ытларах парса тӑрас, ҫапла вара тӑшмана ҫӗнтерес сехете ҫывхартас ӗҫе чӑрмантараҫҫӗ. Тӗрӗссипе каласан, вӗсен пӳтсӗр ӗҫӗ тӑшмана кӑна пулӑшать.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ӗҫ дисциплинине пӑсни, чи малтан, партипе комсомол, профсоюз организацийӗсем, хуҫалӑх руководителӗсем ӗҫ законӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырассишӗн кирлӗ ҫирӗплӗхпе кӗрешменнинчен килет. Ку сиенлӗ япала. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ӗҫ законӗсене уйрӑмӑнах ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртни кирлӗ. Ӗҫ дисциплинине пӑсакансене законсем хушнӑ пек ответ тыттармалла. Дисциплинӑна пӑсни—ҫӗршыв умӗнче преступлени туни пулать. Дисциплинӑна пӑсакансене хӳтӗлекенсем хӑйсем те айӑпа кӗреҫҫӗ. Вӗсем хӑйсем те ответ тытма тивӗҫлӗ.

Пире хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплина кирлӗ. Кашни ҫын хӑйӗн вырӑнӗнче сехет пек тӗрӗс ӗҫлемелле. Хӗрлӗ Ҫар валли ҫӗнтерӳ тума хӗҫпӑшалсем, вӑрҫӑ техники, снаряжени, апат-ҫимӗҫ ытлӑн-ҫитлӗн парса тӑракан совет тылӗ лайӑх ӗҫлесси ҫавӑнтан килет те ӗнтӗ.

Партипе совет, комсомол тата профсоюз организацийӗсен ӗҫ законӗсене ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртнипе пӗрлех, мӗнпур рабочисемпе служащисене тата инженерла-техникла работниксене хамӑр ҫӗршыври хастарлӑ ӗҫӗн примерӗпе воспитани парса пымалла. Ку ӗҫе халӗ, нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма хатӗрленнӗ вӑхӑтра, нихӑҫанхинчен те лайӑхрах йӗркелеме кирли пурнишӗн те паллӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче предприятисемпе учрежденисенче ӗҫлеме ҫамрӑксем нумай хутшӑнчӗҫ. Вӗсем дисциплинӑна, производство йӗркине лайӑххӑн хӑнӑхса ҫитеймен-ха. Ҫавӑнпа та вӗсене воспитани парасси ҫине уйрӑмӑнах тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

Рабочисем валли тухӑҫлӑн ӗҫлеме условисем туса пани, халӑх хуҫалӑхне политикӑллӑ ӗҫе большевикла йӗркелени, малта пыракан рабочисен паха опычӗсене анлӑн сарни, ӗҫ дисциплинине пӑсакансене хирӗҫ хаяррӑн кӗрешни, — ҫаксем пулаҫҫӗ те ӗнтӗ предприятисемпе учрежденисен ӑнӑҫлӑ ӗҫӗн иксӗлми ҫӑлкуҫӗсем. Ҫавсем ҫинчен пирӗн пӗр минутлӑха та манмалла мар.

Пирӗн парти, Ленинпа Сталин ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес ыйтӑва яланах пысӑк вырӑна хураҫҫӗ. «Вӑрҫӑ вӑл вӑрҫӑ, вӑл тимӗр пек ҫирӗп дисциплина туса хушать»,—тенӗ Владимир Ильич Ленин. Халӗ, отечественнӑй вӑрҫӑн татӑклӑ тапхӑрӗнче, фронтра та, тылра та хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплина пулмалла. Хурҫӑ пек ҫирӗп дисциплина пирӗн совет халӑхӗн фронтри тата тылри ҫӗнтерӗвӗсене ӳстерме, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗнтерес сехете ҫывхартма пулӑшать.

КУСЛАВККА РАЙОНӖ ҪУРАКИ ПЛАННЕ ТУЛТАРНА

КУСЛАВККА, июнӗн 3-мӗшӗ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем, 9.988 гектар вырӑнне 10.087 гектар акса, ҫураки планне ирттерсе тултарнӑ. 56 колхозран 45-шӗ ҫураки ӗҫӗсене пӗтӗмпех вӗҫленӗ.

30 колхоз ҫӗртме тума тытӑннӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Телефонпа).** Колхозсем массӑллӑн ҫӗртме тума тытӑнчӗҫ. 30 колхоз ҫак юлашки кунсенче кӑна 400 гектар ытла ҫӗртме тунӑ. «Пахарь» колхоз ҫӗртме сухи 25 гектар, «Волга» колхоз—18 гектар сухаланӑ. «Малалла» колхоз ирхи ҫӗртме ӗҫӗпе пӗрлех ҫум ҫумлама тытӑнчӗ. Кунта июнӗн 1-мӗшӗ тӗлнех 14 гектар ҫӗртме тунӑ, 40 гектар ҫум ҫумланӑ. «12 лет Октября» колхоз (председателӗ Васильев юлташ) тырӑ калчисене пӗр хут пӗтӗмпех ҫумкурӑксенчен тасатса тухнӑ.

Ирхи ҫӗртме тӑвас ӗҫ «Янмурзино», «Чувашия», «Четай», Войков ячӗпе тӑракан колхозсенче аван пырать. Ҫак колхозсенче ҫӗртме тумалли анасем ҫине витесенчен, ферма картишӗсенчен тата ытти вырӑнсенчен тислӗк турттараҫҫӗ те ҫавӑнтах сухаласа хӑвараҫҫӗ.

«Янмурзино» колхозри тимӗрҫӗ Гордеев юлташ жнейкӑсемпе молотилкӑсене юсама тытӑннӑ.

Анчах та Буденный ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ Алексеев юлташ) ялхуҫалӑх машинисене типтерсӗр тыткалаҫҫӗ. 3 жнейка, 1 молотилка, косилка кунта хӗлле те юр айӗнчех ларнӑ, тутӑхса кайнӑ, халӗ ҫилпе тата хӗвелпе ҫурӑкаланса хавшаса лараҫҫӗ. Пӗр жнейкин платформи юрӑхсӑра тухнӑ. Кунта вӗсене юсас пирки шутламаҫҫӗ-ха.

С. ШАДИН.

ҪУРАКИНЕ ВӖҪЛЕМЕЛЛИ ВУНӐКУНЛӐХ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

(Июнӗн 3-мӗшӗ тӗлне)

Районсем	Мӗнле вырӑн йышӑнать
Красноармейски	1
Элӗк	2
Сӗнтӗрвӑрри	3
Чурачӑк	4
Ҫӗрпӳ	5
Муркаш	6
Вӑрнар	7
Сӗнтӗр	8
Калинино	9
Куславкка	10
Шупашкар	11
Октябрьски	12
Вӑрмар	13
Елчӗк	14
Ишлей	15
Шӑхасан	16
Етӗрне	17
Канаш	18
Тӑвай	19
Советски	20
Комсомольски	21
Йӗпреҫ	22
Ҫӗмӗрле	23
Чкаловски	24
Первомайски	25
Улатӑр	26
Пӑрачкав	27
Хӗрлӗ Чутай	28
Шӑмӑршӑ	29
Кувакино	30

Ҫуракине вӗҫлемелли вунӑкунлӑх

Ҫуракинче тухӑҫлӑ та лайӑх ӗҫленӗшӗн, ӗҫҫынни депутачӗсен Советсни райсовечӗн исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп Хӑми ҫине кӗртнӗ:

57. **«Комбайн» колхоз** (председателӗ **М. Абрамов** юлташ, парти кандидачӗсен группин руководителӗ **П. Н. Сорокин** юлташ). Колхоз ҫуракин государство планне, 14 ӗҫкунӗнче 219 гектар акса, 103 процент тултарнӑ, ӗҫ пахалӑхӗ лайӑх. Унсӑр пуҫне планран ирттерсе 7,25 гектар тӗштырӑ акнӑ. Социализмлӑ ӑмӑртура малти вырӑна 2-мӗш бригада тухнӑ (бригадирӗ **Н. А. Кокорин** юлташ). Ҫак бригадӑри сухаҫӑсем: **Е. Мухина, Т. Ермакова, Е. Абрамова, Е. Малышева, Е. Николаева, Е. Александрова** юлташсем кашни кунхи нормӑна 105—170 процента ҫити тултарса пынӑ. Сӳрелекенсем: **Т. Иванова, Т. Абрамова** юлташсем кашни кунах ӗҫ нормине 130—160-шар процент тултарса пынӑ. Акакансем: **Д. Филиппов, А. Пахомов** тата **А. Осипов** юлташсем нормӑна 115—125-шер процент тултарса ӗҫленӗ. Колхозӑн старши конюхӗ **Максим Юманкин** лашасене тӑрӑшса пӑхнӑ.

58. **«За коммунизм» колхоз** (председателӗ **Н. Г. Григорьев** юлташ, комсомолӑн колхозри организацийӗн секретарӗ **Н. М. Матвеев** юлташ). Колхоз ҫуртыррисене планпа пӑхнӑ пур культурӑсем тӑрӑх та 9 ӗҫ кунӗнче лайӑх пахалӑхпа акса пӗтернӗ, агротехникӑллӑ мероприятисене тӗрӗс пурнӑҫласа пынӑ. Ҫуракинче сухаҫӑсем: **В. Васильев, Е. Михайлова, Н. Федорова** юлташсем фронтри пек ӗҫленӗ, кулленхи нормӑна 110—130 процент таран тултарнӑ.

59. **«Новый быт» колхозри 2-мӗш бригада** (бригадирӗ Агриппина Матвеевна **Юхтанова** юлташ). Ҫак бригада ҫуракки планне 8 ӗҫ кунӗнче, 45 гектар вырӑнне 49 гектар акса, 108 процент тултарнӑ. Ӗҫ пахалӑхӗ лайӑх. Сухаҫӑсем — **Й. Муравьев, А. Данилова** юлташсем, сӳреҫӗсем — **Ф. Арсентьева, А. Юхтанова** юлташсем, акакансем — **П. Воротниковпа И. Муравьев** юлташсем фронтри пек ӗҫленӗ, вӗсем кулленхи ӗҫ нормине 120—150 процент таран тултарса пынӑ.

Фронтовиксен семьисене пулӑшма 1.221 гектар акнӑ

Пӑрачкав районӗнчи «Красный пахарь» колхоз членӗсем пуҫарнипе, пирӗн республикӑри колхозсем ҫар ҫыннисен семьисене пулӑшмалли фонда ҫураки планӗнчен ирттерсе тырӑ акма тытӑнчӗҫ. Паянхи кун тӗлне ҫак фонд валли пурӗ 1.221 гектар акнӑ. Уйрӑмах ҫак ӗҫре Шупашкар, Элӗк, Сӗнтӗр, Елчӗк районӗсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем кашниех 80—90-шар гектар акнӑ.

Анчах чылай районсенчи колхозсем ҫак паха ӗҫе кирлӗ пек хакламаҫҫӗ-ха. Уйрӑмах Улатӑр, Йӗпреҫ, Кувакино, Канаш, Первомайски районӗсенче ҫак ӗҫ чӑтма ҫук начар пырать.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫуракине ирттермелли фронтовой вунӑкунлӑхра ҫар ҫыннисен семьисене пулӑшмалли фонда планран ирттерсе акмалли ҫинчен кӑтартса пачӗ. Ҫар ҫыннисен семьисене пулӑшмалли фонд валли кашни колхозрах тырӑ акса хӑвармалла.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майӑн 31-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Пӑрачкав районӗнчи «Красный пахарь» колхоз членӗсем чӗнсе каланине хапӑл туса, районри нумай колхозсем ҫураки планне тултарнӑ хыҫҫӑн фронтовиксен семьисене пулӑшмалли фонда планран ирттерсе акаҫҫӗ. «Свобода» колхоз—0,8 гектар ҫӗрулми, «Большевик» колхоз—0,8 гектар сӗлӗ, «Ударник» колхоз 0,5 гектар урпа, Буденный ячӗпе тӑракан колхоз 0,5 гектар урпа, «Красноармеец» колхоз 2 гектар пӑрҫа акнӑ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Ҫуракине ҫак кунсенчех пӗтерессишӗн кӗрешетпӗр

ЧКАЛОВСКОЕ, июнӗн 3-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Ҫураки планне паянхи кун тӗлне 75 процент тултартӑмӑр. Уйрӑмӑнах «Кзыл йолдыш», «Правда», «Победа», колхозсем юлса пыраҫҫӗ. Ака ӗҫӗ ҫак колхозсенче ытла та вӑрӑма тӑсӑлчӗ. Кунта туртӑм вӑйӗ начарччӗ. Юлашки вӑхӑтра лашасене хирти апатпа тӑрантарма тытӑнсан, вӗсем лайӑхланчӗҫ.

Районра «Красный Октябрь» колхоз малта пырать, ҫураки планне 118 процент тултарнӑ, «Кзыл тан» колхоз та лайӑх ӗҫлет. Колхоз (председателӗ Фейзуллин юлташ) ҫураки планне 103 процент тултарнӑ хыҫҫӑн хӑйӗн вӑрлӑхӗпе, лашисемпе тата ӗҫ вӑйӗпе 20 гектар «Первое мая» колхоза акса пачӗ. «Красный Октябрь» колхоз та (председателӗ Х. Булатов юлташ) Ленин ячӗпе тӑракан колхоза 20 гектар акса пулӑшрӗ. Нариманов ячӗпе тӑракан колхоз Ленин ячӗпе тӑракан колхозӑне 10 гектар акрӗ, халӗ те унта 8 лаша ӗҫлет.

Ҫуракине вӗҫлемелли фронтовой вунӑкунлӑхра ҫураки планне тултарассишӗн колхозниксем ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ.

З. АХСЯНОВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн пуҫлӑхӗ.

ҪУРАКИНЕ ВӖҪЛЕС УМӖН

ОКТЯБРЬСКОЕ, июнӗн 2-мӗшӗ. (Телефонпа). Ҫуракине вӗҫлемелли вунӑкунлӑхра районри юлса пыракан колхозсем ҫураки ӗҫӗсене хӑвӑртлатрӗҫ. Паянхи кун тӗлне районӗпе ҫураки планне 98 процент ытларах тултарнӑ, пурӗ 11.500 гектар акнӑ. Паян-ыран районри колхозсем ҫураки планне тултараҫҫӗ. Малта пыракан «Венера» колхоз (председателӗ Прокопьев юлташ), Тельман ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Чурмаков юлташ), ҫураки планӗсене тултарса, юлса пыракан колхозсене пулӑшрӗҫ. «Венера» колхоз ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ ячӗпе тӑракан колхоза 10 гектар акса пачӗ, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз «Осоавиахим» колхоза, Тельман ячӗпе тӑракан колхоз «Красный борец» колхоза пулӑшрӗҫ.

Пирӗн районри колхозсем фермӑсем ҫумӗнчи участоксене пурӗ 300 гектар акмалла. Ҫак ӗҫе тытӑнманпа пӗрех-ха. Июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурӗ те 30 гектара яхӑн ҫеҫ акнӑ. Выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекенсем ҫывӑх кунсенчех ҫак плана тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ферма ҫумӗнчи участоксем выльӑх-чӗрлӗх апачӗн шанчӑклӑ базине тӑвас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑннине асра тытса, эпир ку ӗҫе те ӑнӑҫлӑн вӗҫлӗпӗр

Колхозсенче ҫум ҫумлас ӗҫ те сарӑлса пырать. Паянхи кун тӗлне районӗпе 696 гектар ҫумланӑ.

И. ЧИРКОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

1944 ҪУЛХИ ИЮНӖН 1-мӗшӗ ТӖЛНЕ РЕСПУБЛИКӐРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ МӖНЛЕ ӖҪЛЕНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Тракторсемпе ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне тултарнӑ (процентпа)
Шӑхасан	155,2
Красноармейски	144,4
Вӑрнар	143,0
Ҫӗрпӳ	140,8
Йӗпреҫ	137,8
Тӑвай	129,6
Куславкка	123,6
Комсомольски	121,4
Ишлей	118,8
Елчӗк	110,4
Сӗнтӗр	107,7
Вӑрмар	106,3
Чкаловски	105,3
Сӗнтӗрвӑрри	101,7
Калинино	100,6
Элӗк	100,0
Хӗрлӗ Чутай	96,3
Етӗрне	93,1
Шупашкар	92,2
Первомайски	91,7
Ҫӗмӗрле	91,4
Сурмайдан	88,8
Канаш	82,5
Кувакино	76,7
Пӑрачкав	67,4
Улатӑр	62,3
Шӑмӑршӑ	60,2
Кожевински	56,2
Октябрьски	51,2
Пӗтӗмпе	101,1
Майӑн 20-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	69,0

Киев пионерӗ икӗ ялава ҫӑлнӑ

Хисеплӗ редактор юлташ! Пирӗн ҫӗршыв нумай паттӑрла ӗҫсем ҫинчен пӗлет. Виҫӗ ҫул пынӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн боецсем совет ҫынни мӗн тума пултарнине пӗтӗм тӗнчене кӑтартса пачӗҫ. Манӑн та ҫамрӑк патриот Костя Кравчук икӗ ялав ҫӑлса хӑварни ҫинчен Тӑван ҫӗршыва пӗлтерес килет. Эпир, Хӗрлӗ Ҫарӑн воинӗсем, салтака чыс тунӑ пек хисеплесе унӑн аллине чӑмӑртатпӑр.

Ҫак ӗҫ 1941 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче пулса иртнӗ. Киев таврашӗнчи сарӑ каштансем ҫийӗнче ҫапӑҫӑвӑн пӳҫӗ тӗтӗмӗ йӑсӑрланнӑ. Чул ҫуртсемпе ҫурт ҫийӗсем ҫине пульӑсем шӑхӑра-шӑхӑра пырса сирпӗннӗ. Ҫав вӑхӑтра Костя Кравчук—Оболенски урамра пурӑнакан вунӑ ҫулхи ача—алӑка уҫса пӑхнӑ та, хӳме ҫумӗнче такамсем йыпӑшнине илтнӗ. Ача вӑрахӑн алӑка хупса сад патнелле пынӑ. Унта вӑл аманнӑ икӗ боец выртнине курнӑ. Вӗсенчен пӗри Костьӑна чӗнсе ҫапла ыйтнӑ:

— Эсӗ пионер-и?

— Пионер,—ответленӗ Костя.

— Акӑ, ил ҫак тӗркессене... Унта икӗ ялав... пытар вӗсене, пирӗннисем таврӑниччен усра. Ҫакӑн ҫинчен никама та ан кала. Ӑнлантӑн-и? Ялавсене илсен, Костя боецсенчен тытӑнчӑклӑн ыйтнӑ:
— Эсир тавӑрнатӑр-и?

— Тавӑрнатпӑр, ывӑлӑм, тем пулсан та тавӑрнатпӑрах,—тенӗ боец. Хӑйӗн юлташне пулӑшса вӑл ухсахлакаласа урам тӑрӑх утнӑ. Шоссе тӑрӑх, тусан мӑкӑрлантарса, нимӗҫ танкӗсем кӗрлесе кӗнӗ те ӗнтӗ. Костьӑна ялавсем паракан вӑрӑм боец малта пыракан танк айне сасартӑк граната вӑркӑнтарнӑ. Танк сирпӗнсе кайнӑ... Костя урӑх нимӗн те курман, вӑл килелле тарнӑ.

Ача малтан ҫухалса кайнӑ: нимӗҫсем, унӑн вӑрттӑнлӑхне пӗлсен, хӑйне те, аппӑшӗ-амӑшне те персе пӑрахасран хӑранӑ вӑл. Анчах ерипенех вӑл лӑпланса ҫитнӗ те ялавсене ӑҫта пытарасси ҫинчен шутлама пуҫланӑ.

Малтанах вӑл сада чупса тухнӑ, ялавсене вата йывӑҫ айне пытарнӑ. Унтан, киле таврӑнсан, вӑл шикленме пуҫланӑ: ку вырӑн шанчӑклӑ пулӗ-ши, шутланӑ вӑл. Вара ялавсене урӑх ҫӗре пытарма йышӑннӑ. Каҫхине, ялавсене тирпейлӗн кӑларса михӗпе чӗркенӗ те, ҫиелтен смалапа шӳтернӗ. «Капла шыв та витеймӗ»,—шутланӑ вӑл. Хула тулашӗнче Костя шанчӑклӑ вырӑн пуррине пӗлнӗ. Вара шуҫӑм кӑвакарсан, нимӗҫсем нимӗн те ан шутлаччӑр тесе, вӑл ҫитерме кайнӑ пек ӗне хӑваласа тухнӑ. Хула тулашӗнче вӑл пӑрахӑҫа тухнӑ кулата тупнӑ. Йӗри-тавра никам та ҫуккине курсан, Костя тӗркене кулатана пытарнӑ.

Ҫавӑнтанпа ӗнтӗ Костя Кравчук хумханулла нумай вӑхӑт тӳссе ирттернӗ. Вӑл пӗрмаях ялавсем ҫинчен шутланӑ. Нимӗҫсем яланах вӑл ялавсене шыранӑ пек, акӑ вӗсем вӑрттӑн вырӑн патне пырса ҫитнӗ пек, туйӑннӑ ӑна. Ҫавӑн пек чухне вӑл, амӑшне пӗр сӑмах хушмасӑр, кулата патне, хула хыҫне, чупнӑ.

Амӑшӗ, Марфа Фоминична, ачан темле вӑрттӑнлӑх пуррине, вӑл темскер упранине туйнӑ. Ҫавӑнпа вӑл ывӑлӗнчен сахал мар тӗпченӗ:
— Мӗскер пытаратӑн эсӗ? Хӗҫпӑшал мар пулӗ-ҫке?
— Ҫук, анне, манӑн нимӗн те ҫук.

Икӗ ҫул иртнӗ хыҫҫӑн Оболенски урамра пурӑнакан ҫынсем орудисен сассисене илтнӗ: Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерсе таврӑннӑ. Каялла таракан нимӗҫсем, ҫиллипӑшшине шӑнараймасӑр, нимӗн тума аптӑраса Киев ҫыннисене пурне те килӗсенчен хӑваласа тухма пуҫланӑ. Костьӑпа унӑн тусӗсене эсэсовецсем ярса илнӗ, товарнӑй вагона хупса ирӗксӗр Германие илсе кайнӑ. Анчах ҫул ҫинче ача, поезд вӑркӑнса пынӑ вӑхӑтрах, вагон ҫинчен сиксе юлнӑ. Ялта вӑл хӑйӗн амӑшне шыраса тупнӑ, нимӗҫсене хуларан хӑваласа кӑларсанах килне таврӑннӑ.

Ҫула май Костя хайхи кулата патне пынӑ.

Тепӗр кун ирхине Костя Кравчук ҫӗнӗ кӗпе тӑхӑннӑ, михӗрен ялавсене кӑларса якатса типтерленӗ те комендант патне кайнӑ.

Часах вӑл полковник патне ҫитнӗ, унӑн умӗнче чӗркенӗ ялавсене сарнӑ, ҫак историе каласа панӑ. Ҫамрӑк патриотӑн паттӑрлӑхӗпе хумханса, темиҫе орденлӑ ватӑ полковник ачана ыталаса илнӗ.

— Спасибо сана, пӗчӗк герой!—тенӗ вӑл.

Акӑ, юлташсем, Киев пионерӗ Костя Кравчук икӗ ялав ҫӑлни ҫинчен калакан истори. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем унӑн паттӑр ӗҫне манас ҫук.

Капитан Мих. СТЕПИЧЕВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ ҪАР.
(«Комсомольская Правда», 1944 ҫулхи июнӗн 2-мӗшӗ).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 2-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июнӗн 2-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ЯССЫ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри тата ҫурҫӗререхри районра тӑшманӑн пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сирсе-сирсе янӑ. Хӑйӗн ҫыннисемпе техники тӗлӗшӗнчи пысӑк ҫухатусем тӳссе, тӑшман Яссы хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн оборона ӑшне кӑштах савӑлланса кӗнӗ. Яссы хулинчен ҫурҫӗререхре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пур атакисене те ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ. Малтанлӑха илнӗ даннӑйсем тӑрӑх, кун каҫиччӗнхи ҫапӑҫура нимӗҫсен 25 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июнӗн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 27 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 47 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Яссы хули районӗнче ирхине тӑшман пирӗн позицисене атакӑланӑ. Атакӑна тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсем кӗнӗ. Пирӗн енчен вӑйлӑ пенине тӳсеймесӗр, нимӗҫсем советсен позицийӗсем патне ҫитеймесӗрех темиҫе хутчен те каялла таврӑна-таврӑна кайнӑ. Кӑнтӑрла иртсен кӑна Яссы хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман, пысӑк ҫухатусем тӳссе, пирӗн оборона ӑшне кӑштах савӑлланса кӗнӗ. Яссы хулинчен ҫурҫӗререхре нимӗҫсен пур атакисене те сирсе янӑ. Пирӗн позицисем умӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем питӗ нумай выртса юлнӑ. Пӗр участокра кӑна 900 гитлеровеца, 7 танк тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 тупӑ пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен самаях пысӑк ушкӑнне тыткӑна илнӗ.

* * *

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман 4 хутчен пирӗн позицисене атакӑланӑ. Анчах та нимӗҫсем нимӗнле ҫитӗнӳ те тӑвайман, малтанхи позицисем ҫине каялла чакнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 вилли ытла выртса юлнӑ. Нимӗҫсен хӑй тӗллӗн ҫӳрекен пӗр тупине тата икӗ бронетранспортерне ҫунтарса янӑ.

* * *

Витебск хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшмана хирӗҫ персе тӑнӑ. Мусатов лейтенант командир пулса ертсе пыракан снайперсен ушкӑнӗ юлашки вӑхӑтра 147 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Снайпер Ислам Гайсин —27 нимӗҫе, снайпер Катков 25 нимӗҫе вӗлернӗ.

* * *

Ҫурҫӗрте Юсупов капитан подразделенийӗнчи боецсем, ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫитиех аркатса тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур. 7 пулемет, пӗр радиостанци тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Козлов лейтенант ертсе пыракан боецсен ушкӑнӗ ҫӗрле белофинсем тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ. Гранатӑсем вӑркӑнтарса тата автоматсемпе персе, разведчиксем тӑшманӑн 36 салтакне вӗлернӗ.

* * *

Норвегин ҫурҫӗр ҫыранӗсем патӗнчи тӑшман ҫулӗсем ҫинче кӗрешекен пирӗн карапсем нимӗҫсен 4.000 тонна таякан суднине шыва путарнӑ, тепӗр суднине самаях сиенленӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флотӗн сывлӑшри разведки майӑн 30-мӗшӗнче каҫхине Нарва заливӗнче нимӗҫ карапӗсен ушкӑнне асӑрханӑ. Совет Союзӗн Геройӗ 3-мӗш ранглӑ капитан Осипов ертсе пыракан торпеда катерӗсем тӑшмана атакӑланӑ. Артиллери вут-хӗмӗ витӗр татса кӗрсе, торпеда катерӗсем нимӗҫсен хуралта пыракан 3 карапне шыва путарнӑ, десантсем антармалли хӑвӑрт ҫӳрекен икӗ суднине самаях сиенленӗ. Пирӗн катерсем пурте хӑйсен базисене каялла таврӑннӑ.

* * *

Белорус партизанӗсен отрячӗ Вилейка облаҫӗнчи пӗр ялта вырнаҫса тӑнӑ нимӗҫ гарнизонне тапӑннӑ. Штык вӗҫҫӗн пуҫланса кайнӑ хаяр тытӑҫура партизансем 40 нимӗҫе вӗлернӗ. Тыткӑна илнисем пур. Нимӗҫсенне пӗр станковӑй пулемет, 55 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Партизансен «Советлӑ Белоруссишӗн» ятлӑ отрячӗ пӗр уйӑх хушшинче нимӗҫсен 18 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫар енне румынсен 18-мӗш горнострелковӑй дивизийӗнчи 18-мӗш полкран салтаксемпе офицерсен ушкӑнӗ каҫнӑ. Ҫав ушкӑнри лейтенант Георге Л. ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизи пуҫӗнче генерал Бэлдеску тӑрать. Вӑл — пирӗн тӑван ҫӗршыва сутнӑ чи усал пырать». тӑшман. Нимӗҫсене юрама тӑрӑшса, вӑл пӗтӗм Румынине пӗр хӗрринчен пуҫласа тепӗр хӗррине ҫитиччченех ҫунтарса яма, унӑн халӑхне пӗчӗк ачаран пуҫласа кӑвакарнӑ старики сене ҫитиччченех вӗлерсе пӗтерме хатӗр. Ҫав Бэлдеску оккупацилене совет территорийӗнче питех те ирсӗр хӑтланчӗ. Офицерсем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, вӑл совет халӑхне ҫаратас тата мирлӗ ҫынсене персе пӑрахас тӗлӗшпе хаяррӑн ӗҫленӗ». Лейтенант малалла ҫапла каланӑ: «Румынири халӑх хӑраса аптӑраса ӳкнӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пуйса кайнӑ паллӑ чиновниксем нумайӗшӗ хӑйсен мулӗсене ют ҫӗршывсене куҫараҫҫӗ. Сӑмахран каласан, Памфилий Шейкару хӑйӗн пӗтӗм пурлӑхне тата «Курентул» хаҫатӑн акцийӗсене сутнӑ та Лиссабон хулинче фабрика илнӗ. Хӑшпӗр чиновниксем ют ҫӗршывсене тухса тарнӑ та ӗнтӗ. Румыни правительстви фронт ҫывӑхӗнчи халӑха урӑх ҫӗре куҫарас ӗҫе ӑнӑҫлӑн тӑваймарӗ. Фронт ҫывӑхӗнчи ялсенчен таракан ҫынсем чугун ҫул транспортне йӗркерен кӑларчӗҫ. Правительство ҫав таракан ҫынсене Аржеш, Дембовица тата Ольтенью уезӗсене тултарать. Халӑх ытла та нумай пухӑнса тулнипе ҫав районсенче апат-ҫимӗҫ ҫитми пулчӗ. Нумайӗшӗ уҫӑ пӗлӗт айӗнчех пурӑнаҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра халӑх хӑех нимӗҫсене хирӗҫ тӑнисем пулнӑ. Правительство гитлерла Германие хирӗҫ тӑракансене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтерсе пырать. Анчах та темӗнле хаяр мерӑсем йышӑнсан та, Антонеску фашизма хирӗҫ пыракан юхӑма пусарса лартма пултараймарӗ. Румынире партизансен вӑрҫи ӳснӗҫемӗн ӳссе пырать».

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинчи вырăнти промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕнчи, промысла кооперацине инвалидсен кооперацийĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 109-мĕш номерĕнче).

19. Василий Афанасьевич **Афанасьев**—Канашри Сталин ячĕпе тăракан промартельти тукупи заавкана.
20. Григорий Миронович **Байналова** — Канаш районĕнчи «Авангард» промартельти çамсăсем йăзалакан цех начальникне.
21. Никанор Варфоломеевич **Баранова**—Канашри Сталин ячĕпе тăракан промартелĕн председательне.
22. Мария Михайловна **Беглова**—Канаш районĕнчи «1-ое Мая» промартельти станочницăна.
23. Михаил Александрович **Бибикова**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Кооператор» промартельти рабочие.
24. Василий Александрович **Бурашникова**—Етĕрнери Сталин ячĕпе тăракан артелĕн председательне.
25. Давид Соломонович **Быка**—Канашри типографин директорне.
26. Андрей Васильевич **Васильева**—Канашри «Авангард» артель правлени председательне.
27. Геннадий Егорович **Васильева**—Канаш хулинчи промкомбинатăн директорне.
28. Гурий Васильевич **Васильева**—Тăвай райпромкомбинатĕн плотникне.
29. Василий Федорович **Васюкова**—Сĕмĕрле районĕнчи «Обод» артелĕн бондарьне.
30. Харитон Ильич **Виноградова**—Етĕрнери райпромкомбинатăн корзинщикне.
31. Любовь Ефимовна **Владимировăна**—Октябрьски районри «Труд» артельти ВЛКСМ комитечĕн секретарьне.
32. Сергей Гаврилович **Гаврилова**—Шăхасан райпромкомбиначĕн тимĕрçне.
33. Павел Васильевич **Галкина**—«8-ое марта» артель правлени председательне.
34. Матрена Герасимовна **Герасимовăна**—Кусламкка районĕнчи Киров ячĕпе тăракан промартельти шорникне.
35. Лидия Васильевна **Гладышевăна**—вырăнти промышленноçть халăх комиссариачĕн плани отделĕн начальникне.
36. Иван Андреевич **Глотова**—Çĕрпÿ районĕнчи «Лесоруб» артелĕн столяра.
37. Анна Васильевна **Горбунова**—Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри бригадирне.
38. Ксения Петровна **Горбуновăна**—Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕн мастерĕн помощникне.
39. Августа Дмитриевна **Гордеевăна**—Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» промартельти çĕвĕçе.
40. Степан Федорович **Гордеева**—Шупашкарти «Ростальвано» комбиначĕн хатĕрлев пункчĕн заведующине.
41. Наталия Ивановна **Горланова**—Шăхчурари Куйбышев ячĕпе тăракан промартельти вăрман касакана.
42. Кузьма Яковлевич **Гершнова**—Сурмăйĕшри вăрман промысла артелĕнчи плотникне.
43. Васса Максимовна **Грачевăна**—Первомайски крахмал заводĕн патока тăвакан цехĕн мастерне.
44. Василий Александрович **Гречова**—Канаш районĕнчи «1-ое Мая» промартельти столяра.
45. Иван Григорьевич **Григорьева**—«Универсал» промартельти мастера.
46. Пелагея Петровна **Гребоваловăна**—Сĕнтĕрвăррииччи «Портной» промартельти хĕрарăмсен валли кĕпе-тумтир çĕлекен цехăн заведующине.
47. Захар Андреевич **Гуськова**—Улатăр хула совет исполкомĕн председатель заместительне пулăшакана.
48. Борис Яковлевич **Давыдова**—Канашри «Швейник» промартельти çĕвĕ çĕлекен цехĕн заведующине.
49. Григорий Сергеевич **Данилова**—Пĕлĕмрери крахмал заводĕн директорне.
50. Матрена Даниловна **Даниловăна**—Вăрнарти апат-çимĕç комбиначĕн çăра тăвакан помощникне.
51. Марфа Даниловна **Даниловăна**—Етĕрнери «Эмос» çу заводĕн работницине.
52. Егор Ефремович **Дачова**—Вăрнар районĕнчи «Универсал» промартельти мастера.
53. Виктор Федорович **Дегтярева**—Канашри промкомбиначĕн жестянщикне.
54. Иван Федорович **Беликова**—«Кожуракиж» промартельти цех заведующине.
55. Сергей Иванович **Дмитриева**—Комсомольски райпромкомбиначĕн урапа-сем тăвакане.
56. Николай Дмитриевич **Дмитриева**—Октябрьски районри «Шарпотреб» промартельти цехĕн бригадирне.
57. Любовь Ивановна **Добровăна**—Октябрьски районри «Труд» промартельти çĕвĕ çĕлекен цехри бригадира.
58. Степан Павлович **Домнова**—Ишекри промартельти чăпта çапакана.
59. Айвик Давыдович **Дувинские**—Улатăри махорка фабрикин директорне.

(Малалли пулать).

ÇĔНĔ ПРОИЗВОДСТВĂСЕМ

ПЕРЕÇ, «Красный строитель» артель çурçулти плана çрохенез 120 процент тултарчĕ. Çак çитĕнĕве артель колективĕ вырăнти ресурссене хăйĕн хусанĕ курса тата çĕе тĕрĕс организацилесе тума пултарчĕ.

Кăçал артельте çĕнĕрен спичка, обоз хатĕрĕсем тăвакан производствăсем, слесарь-ремонтнăй мастерскойĕсем уçнă. Вĕсемсĕр çуçне Хуремалти «Красный водник» колхоз çумĕнче обоз хатĕрĕсем юсакан мастерской ĕçе кĕртнĕ. Асăннă производствăсене организацилени таврари колхозсене нумай пулăшу пачĕ. Халĕ тата артельте хăйра тăвакан, кивелнĕ учебниксене юсакан мастерской уçма хатĕрленеççĕ.

Артельти производствăсемпе мастерскойсен коллективĕсем пурте пĕр-пĕрне ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене çине илнĕ обязательствăсене чысла пурнăçа кĕртеççĕ. Кĕрпек-чапăк тăвакан производствăра (бригадирĕ Фадеев юлташ) çултала-ри плана тултарса çитерет. Вăл керм рабочисем Е. Акимова И. Корчагин юлташсем вырăнĕ норма таран тултараççĕ. Артельте стахановецсен йышĕ ÿссех пырать.

Социализмла ăмăртава организацилеме агитаторсем пулăшаççĕ. Вĕсем, рабочисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пырса, рабочисен активлăхне çĕклеççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

США вице-президенчĕ Уоллес Иркутск хулинче тухса калани

ИРКУТСК, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Çула май Иркутск хулине кĕнĕ США вице-президенчĕ Генри А. Уоллес ĕнер интеллигенципе хулари общественăллă организацисен представителĕсен облаçри театр çуртĕнче пулса иртнĕ пухăвĕнче сăмах тухса каланă. Пухăва пынă халăх Уоллес господина питех те ăшшăн кĕтсе илнĕ. Уоллес господин хăйĕн вырăсла калана сăмахĕнче çапла калланă:

«Иртнĕ эрнере эпĕ сирĕн çĕршывра питĕ хумханса килсе кĕтĕм. Эпĕ Уэлькалра, Сеймчанра, Магаданра, Комсомольскра тата Якутскра пултăм. Эпĕ сирĕн ялхуçалăх экспоначĕсемпе паллашрăм. Эпĕ çавăн пекех совет сынисем шахтăсенче, металлургипе авиаци заводĕсенче тата судносем тăвакан верфьсенче мĕнле те пулин ытларах продукци кăларма тăрăшнине куртăм. Эпĕ сирĕн пахчасенче ĕçлесе пăхрăм, пахчаçсемпе тĕл пулса паллашрăм. Эпĕ сирĕн нумай сĕт паракан ĕнесене, сыснасемпе чăх-чĕпсене куртăм. Эпĕ сирĕн аэродромсенчи сооруженисене куртăм, сирĕн летчиксемпе тата çар çыннисемпе паллашрăм. Вĕсем хушшинче эпĕ уйрăмах Семенов генералпа Совет Союзĕн Геройне Мазурук полковника палăртса хăвараснăн. Сирĕн паллă администраторсем хушшинче эпĕ Дальстрой директорне И. С. Никишова уйрăмах палăртасшăн, çавăн пекех тата хăвăрт ÿссе пыракан çамрăклăх хулинчи—Комсомольскри фабрикăсемпе заводсене ертсе пыракансене палăртса хăварасшăн.

Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем евĕрлĕ çĕршыв тĕнчере текех çук та. Сирĕн çĕршывăн вĕçĕ-хĕррисĕр аслă уйхирĕсем, ĕмĕрхи вăрмансем, тем анлăш шывсемпе пысăк кÿлĕсем, шăрăх çанталăкпа полярти сивĕ çанталăк, сирĕн çĕршыври иксĕлми пуянлăх мана хамăн тăван çĕршыва аса илтерсе тăраççĕ. Çĕпĕрпе унăн геройла халăхĕн историйĕ мана США-н Инçетри Хĕвеланăç çĕрĕсен историне астутарса тăрать. Тĕнчен хăватлă вăйĕсемпе, пурнăçри йывăр условисемпе кĕрешме пуçласа янă çакă икĕ çĕршывăн паттăрĕсем ним хăрамасăр малалла кайса пынă, çĕнĕ хуласемпе ялсем лартнă, çĕнĕ промышленность тунă, хăйсен çĕршывĕсемпе пĕтĕм тĕнчери этемлĕх ырă курмалăх çĕнĕ пурнăç тунă.

Çав кĕрешÿре, çав строительствăра çынсен характерĕсем пиçĕхнĕ, этемлĕх сăпачĕн чи лайăх енĕсем аталанса пынă, пĕлмен-çамăшĕсенчен пыракан социаллă инстинктсем палăрса пынă, пурте пĕр-пĕрине пĕр кăмăллă пулас туйăм çирĕпленсе пынă. Ахаль мар ĕнтĕ çак вăрçăра та Çĕпĕр хăватлăн пулăшрĕ, халĕ те çав тери хăватлăн пулăшса пырать. Çĕпĕртен кайнă боецсем пур фронтсенче те малти ретсенче çапăçаççĕ, Çĕпĕр çыннисем тылра та чи кирлĕ ĕçре, Çĕпĕрти технически работниксем кĕске вăхăт хушшинчех аслă Хĕрлĕ Çара ылханлă та вăйлă тăшманпа çапăçма кирлĕ пĕтĕм çĕнĕ арсенала туса хучĕç, çапла вара Çĕпĕр тăшмана аркатма Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшрĕ.

Ирĕклĕ те анлă çĕршывра суралнă ирĕклĕ çынсем нимĕнле тĕрĕсмарлăха та, нимле пусмăра та тÿсме пултараймаççĕ, вĕсем кĕске вăхăтлăха та чурăлăхра пурăнма килĕшес çук. Халĕ, вăрçă хыççăн пулас тĕнчен ирхи шурăмпуçĕ ериппен хăпарма пуçланă вăхăтра, пирĕн икĕ аслă çĕршыв тата вĕсен союзникĕсем пĕтĕмĕшпех пĕр пулса килĕшсе ĕçлени кăна тĕнчене лăпкă лару-тăру пама пултарни, çав тĕнчене тĕрĕс çулпа ÿссе пыма май пама пултарни уççăнах курăнса тăма пуçларĕ.

Вăрçă хыççăн пулмалли аслă реконструкци ĕçĕнче çакă питех те кирлĕ пулать: çав ĕçре пĕтĕм тĕнче интересĕсене шута илсе, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Çурçĕр-Хĕвеланăç пайĕ, Канада, Аляска тата Советлă Çĕпĕр питĕ пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Çак тем анлăш территорисенче сахал халăх пурăнать, çак территорисене авиаци пулăшнипе аçла илнĕ. Халĕ çав территорисенче пурăнакан çынсене пулăшма вĕсенче ялхуçалăхне тата промышленноçа аталантарса ямалла. США-па Канадăн тивĕçĕ,—Совет Союзĕ Çĕпĕрпе Инçетри-Хĕвелтухăçне аталантарса янă пекех, — хăйсен çурçĕр районĕсене аталантарас тĕлĕшпе татăклăн ĕçлеме тытăнмалла, аслăлăх тĕлĕшпе пысăк вăй-хал хумалла.

Эпĕ çакна шанса тăратăп: пĕр-пĕрне мĕнле майсемпе ĕçлени çинчен пĕлтерсе тăрсан, пĕр-пĕрне лайăх сортлă вăрлăхсем, лайăх ратлă выльăх-чĕрлĕх парса тăрсан, Канадăпа США хăйсен çав районĕсенче продукци илессине самаях ÿстерсе яма пултараççĕ. Кашни хăй тĕллĕн е пĕтĕм ушкăнпа пĕрле темĕн чухлĕ нуша-асап витĕр тухнă çынсен пысăк йышĕ çакна ĕненессĕ: вĕсем асаплăнни харама каяс çук, хăрушă кунсем хыççăн лăпкă çутă кунсем çитессĕ, ун чухне вара кашни çыншăнах пурте тулăх пулĕ, тĕнчере кашни çыншăнах тĕрĕслĕх пулĕ.

Эпĕ çак кунсенче Советсен Инçетри Хĕвелтухăçĕн тата Çĕпĕрĕн районĕсем тăрăх çÿрени, çав районсенчи фабрикăсемпе заводсенче, сăнавлă ялхуçалăх станцийĕсемпе уйхирсенче пулни, эпĕ промышленность предприятийĕсемпе ялхуçалăх учрежденийĕсене ертсе пыракансемпе, вăрçă промышленноçĕнчи тата ялхуçалăхĕнчи рабочисемпе, чи лайăх стахановецсемпе тĕл пулса калаçни, вĕсем манăн тăван çĕршыва—Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче—мĕнле ĕçлесе пурăннине çав тери хытă пĕлме тăрăшни мана çакна çирĕппĕн ĕнентерет: пирĕн çак икĕ аслă çĕршыв хушшинчи туслăх, этемлĕхĕн ирсĕр тăшманне хирĕç—гитлерла Германие хирĕç—пыракан кĕрешÿн фрончĕсенче çапăçакан икĕ çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсен юнĕпе çирĕпленнĕскер, малалла та, вăрçă хыççăнхи вăхăтра та, çавăн пекех ÿссе çирĕпленсе пырĕ».

Пуху хыççăн «Сталинградцы» ятлă спектакль пулнă. Унта Генри Уоллес господин та пулнă.

Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсем

Днепр çинче пулса иртнĕ çапăçусен паттăрĕсем — Совет Союзĕн Геройĕсем **И. В. Яшинпа Ф. П. Ахаев** юлташсем пĕр-ик кунлăха Шупашкара килсе кайрĕç. **Ÿкерчĕк çинче:** Совет Союзĕн Геройĕсем **И. В. Яшинпа** (сылтăмри) **Ф. П. Ахаев** юлташсем Шупашкарта Атăл хĕрринче пĕр-пĕринпе каласса ларассĕ.

Н. ДАНИЛОВ фото-ÿкерчĕкĕ.

Хĕвел ăшши сăмахсемпе саламлатпăр

Герой ятне сума суса,
Халĕ эпĕр
Юрă-сăвă халаласа
Чечеклетпĕр.

Çапăçура çĕнтерÿллĕ
Сăнĕ хитре,
Хĕвел шевли хĕпĕртÿллĕн
Вылять питре

Гитлеризм бандисене
Пăр салатать.
Вăрă-хурах фашистсене
Çапса ватать.

Çĕршер-пиншер нимĕçсене
Аркантарать.
Кĕтÿ-кĕтÿ пÿлсе илсе
Парăнтарать.

Тăван çĕршыв паттăр ывлĕн
Сăн-сăпачĕ —
Çапла пирĕн Поляковăн
Герой ячĕ.

Çĕнтер, герой, хĕрÿ çĕнтер!
Мухтав сана!

Çăва-тĕпне çапса тÿнтер
Эс тăшмана!

Паттăр та кун тенĕ пирĕн
Асаттесем.
Мухтавлă та чаплă вĕсем
Каланисем.

Кăкăр тулли ылттăн-кĕмĕл
Çăлтăрусем,
Пурте паттăр çĕнтернĕшĕн
Чысланисем.

Савăн, герой, хĕрÿ савăн
Иван Кузьмич!
Хаваслă та капăр санăн
Юрă çемми.

Эпĕр паттăр тăвансемпе
Савăнатпăр,
Хĕвел ăшши сăмахсемпе
Саламлатпăр.

Совет Союз паттăр ачи
Сывă пултăр.
Поляковăн чаплă ячĕ —
Ылттăн Çăлтăр.

Н. И. ШЕЛЕПИ,
Чăваш халăх поэчĕ-орденоносец.

Çамрак стахановецсене — комсомол ретне

КАЛИНИНО. Комсомолăн Уйкасри «Комсомолец» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Н. Башкиров) колхоз производствине активлăн хутшăнса ĕçлекен, ĕçре пуçарса пыракан çамрăксене комсомол ретне хутшăнтарас тĕлĕшпе начар мар ĕçлет. Башкиров юлташ çамрăксене пухса час-часах каласусем ирттерет, комсомола кĕрекен кашни çамрăкăн колхозниксем хушшинче авторитетлă пулма кирли çинчен ăнлантаратв. Комсомол организацийĕнче маттан 10 комсомолец кăна пулнă пулсан, çак кунсенче тата 7 çамрăк — суракинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ стахановецсем хутшăнчĕç. Вĕсем хушшинче И. Краснов, И. Быков, А. Арсентьев т. ыт. юлташсем. Вĕсем пурте кăçал 80-шар ĕçкунне яхăн тунă.

Б. ШОРНИКОВ

Писатель-фронтовиксен çĕнĕ произведенийĕсем

Чăвашгосиздатăн кăçалхи планĕнче писатель-фронтовиксен произведенийĕсем чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Паянхи кун тĕлне Уйсай Яковĕн «Вăрçă хирĕнче», Уйăп Мишшин «Малалла, Хĕвеланăçнелле!» ятлă сăвă сборникĕсем, М. Н. Данилов-Чалдунăн «Фронтра» ятлă калавĕсем, Долгов-Хударсемĕн «Çурхи калавĕсем», Леонид Агаковăн «Тăван юнщăн» ятлă повеçĕ тухрĕ.

Çитес кунсенчех поэт-фронтовик Вл. Алатырцевăн «Фронтовая тетрадь» ятлă сăвă кĕнеки (вырăсла) тата Л. Агаковăн «Çапăçу хирĕнче» ятлă фронтри калавсен сборникĕ тухать.

Кăçалхи план тăрăхах фронтри писательсен—Ф. Ситовăн, К. Пайрашăн, М. Кипекĕн калавĕсемпе очеркĕсем тухмалла.

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш вăйĕсемпе Англипе Америкăн сывлăш вăйĕсем хушшинчи çыхăнăва тата пĕр-пĕрин ĕçĕсене йĕркелесе тăрасси çинчен

Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле куçса пынипе вăл кĕрешекен район Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Великобританин стратегиллĕ сывлăш çар вăйĕсем кĕрешекен вырăнсене кĕчĕ.

Çак асăннă сывлăш çар вăйĕсем пĕрлешÿллĕ нацисемшĕн пуринчен те ытларах кирлĕ пулса тăракан объектсене тапăнмалла пултăр тесе, тивĕçлĕ штабсем хушшинче тÿрĕ çыхăну пуçласа янă. (ТАСС).

Америка авиацийĕ Румынири вăрçă объекчĕсене тапăнни

Июнĕн 2-мĕшĕнче ирхине американецсен бомбардировочнăй авиацийĕн самаях пысăк вăйĕсем истребительсем хÿтĕлесе пынипе тăшмана Румынири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Çав тапăнура пулнă американецсен самолечĕсенчен пĕр пайĕ Совет Союзĕнчи авиаци базисене анса ларнă.

Операцисенчен шĕр бомбардировщикпе пĕр истребитель каялла таврăнман. (ТАСС).

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Францири çыранĕнчи вăрçă объекчĕсепе тата Сомюр чугун çул узелне тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Дапири объектсене тапăннă.

Америка çарĕсене Европăна куçарни çинчен США çар министрĕ калани

ВАШИНГТОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). США çар министрĕ Стимсон паян пресс-конференцире çапла каланă: хальхи вăхăтра Европăри фронтра 3.657.000 салтак çапăçаççĕ. Стимсон каланă тăрăх çакă вăл Америкăн пĕтĕм çарĕн 47 процентне пулать. 1944 çул пĕтнĕ тĕлелле американецсен Европăри çарĕсенче тăракан салтаксен шучĕ 5 миллион çынран иртет. Стимсон çакна паллă туса хăварнă: хальхи вăхăтра США-ран Европăна ярса тăракан çарсен тĕп йышĕ—типсĕр çинчи çарсем. Вăл çапла каланă: «Пирĕн çак çарсем, сывлăшри вăйсем тăшмана çĕмĕрме пуçланипе усă курса, тăшмана татăклăн пырса çапма хатĕр тăраççĕ». Стимсон каланă тăрăх, Америкăри çарсене «Европăна куçарасси часах пĕтмелле ĕнтĕ».

АНГЛИН ÇАР ПРОИЗВОДСТВИН МИНИСТРĔ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англин çар производствин министрĕ Литтлтон паян Лондонра сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Эпир континент çине кĕртсе яма хатĕрленĕ çарăн пек хăватлă та йышлă хĕçпăшал вăрçăра çапăçакан урăх нихăш çарăн та çук тесе шутлатăп эпĕ»,—тенĕ вăл. Малалла вăл çапла каланă: «Эпĕ кашни салтакăн хăй аллинчи хĕçпăшал çинчен кăна каламастăп, эпĕ хамăрăн çав çара панă хĕçпăшала пĕтĕмĕшпе илсе калатăп. Эпĕ çапла шутлатăп: вăрçăра çапăçакан çарсене хĕçпăшал парса тăрасси пирĕн армисенче ку таранччен тĕнче курман тулли виçене çитнĕ».

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ВЕЛЛЕТРИ ХУЛИНЕ ТУРТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 1-мĕшĕнче союзниксен çар карапĕсем, тип çĕр çинчи çарсене пулăшса пырса, тăшманăн Ардеа районĕнчи артиллери позицийĕсене пенĕ (Тирренски тинĕс çыранĕнче, Римран кăнтăртарахра). Пени ăнăçлă пулнă: пушарсем тухнă, снарядсем нумайĕшĕ тĕллеве тÿррех пырса тивнĕ.

Союзниксен çарĕсен Италири фрончĕн пĕтĕм талккăшĕпех хаяр çапăçусем пыраççĕ. 5-мĕш армин чаçĕсем Веллетри хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Монте-Артемизиора çирĕпленсе тăнă. Çапла ĕнтĕ тăшман оборонине Вальмонтонепе Веллетри хушшинче татнă. Татса кĕнĕ çарсене тăшман питех те хытă хирĕç тăрать. 8-мĕш армийĕн чаçĕсем çапăçах Виа Касселина çулĕ тăрăх малалла куçса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсен малти соединенийĕсем Ферентина патне (Фрозиноперен çурçĕртерехре) çывхарса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири позицийĕсене атакăланă, çавăн пекех тата тăшманăн Югославири аэродромĕсене, чугун çулĕсене, пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене тата моторизованнăй транспортне тапăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1900 вĕçеве яхăн тунă. Иртнĕ çĕр йывăр тата вăтам бомбардировщиксем Сольнов хули районĕнчи (Венгри) вăрçă объекчĕсене тапăннă.

АЛЖИР, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки хыпарсем тăрăх, 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Виа-Касселина çулне Вальмонтоне районĕнче татнă. Союзниксен çарĕсем Ферентинăна вăркăнса кĕрсе кайнă (Виа Касселина çулĕ çинчи Фрозиноперен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре).

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин 5-мĕш арми çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен чаçĕсем Веллетри хулине кĕнĕ. Веллетри хули нимĕçсен Рим умĕнчи оборона линийĕн узелĕ пулса тăрать. Веллетри Рим хулинчен 20 мильăра тăрать, вăл Виа-Аппиа çулĕ çинче ларать.

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем Ферентина, Вороли, Вальмонтоне тата Веллетри хулисене туртса илнĕ.

ИТАЛИ ПАРТИЗАНĔСЕНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

АЛЖИР, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Бари радио Итали партизанĕсене чĕнсе каланине панă. Чĕнÿре çапла каланă: союзниксен командованийĕ Итали фрончĕн хăшпĕр вырăнĕсенче парашютсемпе десантсем антарнă, тенĕ. Çав чĕнÿре Итали патриочĕсене союзниксен парашютисчĕсене мĕн май килнĕ таран пулăшма чĕннĕ, вăй çитнĕ таран нимĕç çарĕсене каялла чакма чăрмантарма, тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене татма хушнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ТИТО МАРШАЛĂН ШТАБНЕ ТАПĂНМА ХĂТЛАННИ

КАИР, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Халĕ кунта çакна пĕлнĕ: виçĕ кун каярах хĕçпăшаллă нимĕç парашютисчĕсене икĕ батальона Тито маршалăн главнăй штабĕ тăракан района антарнă. Çак парашютистсем Тито маршалăн штабне çĕмĕрсе тăкмалла пулнă. Анчах парашютистсене вăхăтра асăрханă та темиçе çĕр салтакпа офицера вĕлерсе тăкнă, ыттисене тыткăна илнĕ. Гитлеровецсем Тито маршалăн штабне нимĕнле сиен те тăвайман.

БОЛГАРИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

СОФИЯ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Радио тăрăх паян çĕнĕрен тунă Болгари правительствинче кам-кам тăни çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕ правительствăн премьер-министрĕ Иван Багрянов, вăлах ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса та ĕçлет.

ЭКВАДОРАН ÇĔНĔ ПРЕЗИДЕНЧĔ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Китори (Эквадор) корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Веласко Ибара Эквадор президенчĕн ĕçĕсене тума тытăннă.

ИСЛАНДИРЕ ПУЛСА ИРТНĔ РЕФЕРЕНДУМĂН РЕЗУЛЬТАЧĕСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Рейкьявикри (Исланди) корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Исландире пулса иртнĕ референдума, юлашки даннăйсем тăрăх, çитĕннĕ халăхран 98 проценчĕ хутшăннă. 70 пин çын ытла Даннипе çыхăну тытма пăрахмалла тенĕ, 535 çын çакна хирĕç пулнă, 68 пин çын ытла республика тăвассишĕн сас панă, çакна хирĕç 1.064 çын пулнă. Июнĕн 10-мĕшĕнче альтинг (парламент) пухăнмалла, унта вара Исландин пĕрремĕш президентне суйлассĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

Шупашкарти Горкомхозăн сулйĕр секторне çакăн пек работниксем кирлĕ: баланс тума пĕлекен бухгалтер тата счетовод-кассир.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 4. II этаж.

3—1

Шупашкарти «Пекарь» артеле çакăн пек рабочисем кирлĕ: главнăй бухгалтер, старши бухгалтер, плановик, снабжени заведующийĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Интернациональная, 2.

2—1.

Пристань шывпа ăсатма грузсем тата багажсем кирек мĕн чухлĕ те йышăнма пултарать. Учрежденисене хăйсен шывпа ăсатмалли грузĕсене пристань складне илсе пырса пама ыйтаççĕ.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00162 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.